

# МЕДИА – пирĕн чунра

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Светлана Чикмякова



## Çитĕнекен ăру пур енĕпе те тăрăшуллă

**Округри вĕрентӳ учрежденийĕсенчи пĕрлешӳсенчен пĕри – медиацентр – ачасен пурнăçĕнче уйрăмах пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Вăл юлашки çулсенче вăй илсе пырать.**

2022–2023 вĕренӳ çулĕнче Туçи Мăрат шкулĕнче те медиацентр тухăçлă ĕçлени аван курăнчĕ. Кунта ытларах вăтам классенче вĕренекенсем ăсталăха туптанă.

– Пĕр тĕллевпе пухăннă ачасем «ВКонтакте» социаллă сеть, шкул сайчĕ валли тĕрлĕ материалсем çырма вĕренчĕç, сăнӳкерчĕксем, видеороликсем тума хăнăхрĕç. Кăçал та малтанхи çулхи пекех кашни уява халалласа хаçатсем кăлартăмăр, – пĕлтерчĕ центр ĕçне йĕркелесе пыракан Ираида Васильевна Малова. – Пичет материалĕсенче пĕлтерĕшлĕ темăсене туллин уçса пама тăрăшрăмăр. Вĕренӳри çитĕнӳсем, патриотла воспитани, ачасен профориентацийĕ, информаци хăрушсăрлăхĕ, чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе культури, ялти пурнăç тата ытти çинчен çутатрăмăр. Вулакансене интереслĕ пултăр терĕмĕр.

Медиацентр ертӳçи Ираида Малова – пултаруллă педагог. Ачасене тарăн пĕлӳпе воспитани парас ĕçре 28 çул ырми-канми тăрăшать. Вăл кĕçĕн классене вĕрентет, çавăн пекех Ираида Васильевна директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен советникĕ те.

Ăста учитель шкулти «Теремок» пукане театрне те ертсе пырать. Унра режиссер ăсталăхĕ те палăрать. Ахальтен мар пулĕ кăçал унăн вĕренекенĕ Анастасия Семенова «Асам» фестивалĕн округри тапхăрĕнче «Иккĕмĕш планри чи лайăх артист ролĕ» номинацире çĕнтернĕ.

– Пьесăсенчи рольсене калăплани ачасенче актер ăсталăхне кăна мар, вĕсен калаçу чĕлхине те аталантарать. Çавна май ачасен сăмах йышĕ те пуянланать. Шкул театрĕ медиацентр ĕçне ырă витĕм кӳрет, – тет Ираида Васильевна.



■ «Çĕнтерӳ çулĕ» – тăван хаçат», – теççĕ медиацентр хастарĕсем.



■ Эвелина Малова интервью илет.

Медиацентрти маттур ачасене те палăртса хăвармалла. Вĕсем – Константин Максимов (8-мĕш класс), Эвелина Малова (7-мĕш класс)... Вĕренӳ хастарĕсем кашни мероприятине çутатма пулăшаççĕ. Ытти ачасем те вĕсем тимленине кура хастарлăха ӳстереççĕ.

Чăн та, тăрăшни куç умĕнчех. Туçи Мăрат шкулĕн официаллă сайтĕнче те, социаллă сетĕнче те тĕрлĕ хыпар вуласа пĕлме пулать. Пĕринчен тепри интереслĕ.

Шкул медиацентрĕнче çамрăк ăрăва статья, репортаж çырма, тематика видеороликĕсем хатĕрлеме вĕрентеççĕ. Сăнӳкерчĕксен архивĕсемпе ĕçлеме хăнăхтараççĕ. Ачасем «интервьюер» кам иккенне те пĕлеççĕ. «Кăçал шкулта темиçе паттăр салтакпа та тĕлпулусем йĕркелерĕмĕр, – палăртрĕ Василий Малов директор. – Вĕренекенсем ятарлă çар операцине хутшăнакансене сахал мар ыйту пачĕç. Тăнăç пурнăçа хӳтĕлекенсемпе мăнаçланнине пĕлтерчĕç».

Вĕренекенсем ентешĕсем патне виç кĕтеслĕ çырусем те çырнă. Салтаксем ачапча аллипе шăрçаланă йĕркесем чун-чĕрене ăшăтнине палăртнă.

– Кашни сăмахĕ кăмăла çĕклет, çамрăк ăру мирлĕ тӳпе айĕнче пурăнтăр тесе пĕтĕм вăя хурăпăр, – тенĕ вĕсем.

Туçи Мăрат шкулĕнче ачасен пурнăçне кăсăклăрах тума, вĕсен тĕнчекурăмне пуянлатма тăрăшни кашни утăмрах курăнать. Педагогсем профориентаци эрнине иртterессипе те çулсеренех тухăçлă ĕçлеççĕ. Ку вĕренӳ çулĕнче 8–9-мĕш классенче пĕлӳ пухакансем хаçат редакцийĕнче пулчĕç, типографире «Çĕнтерӳ çулĕн» черетлĕ номерĕ епле «пиçсе тухнине» курчĕç. Вĕренекенсем çĕнĕ хаçата алла тытса вулама пуçлани халĕ те куç умĕнчех. Мĕн тери хаваслăччĕ вĕсем!

Кашни ача мĕн пĕчĕкренех хăйне вăл-ку профессире курма ĕмĕтленет. Ӳснĕçемĕн кăмăл туртăмĕ вăйлансах пырать.

– Мана фотограф ĕçĕ ытларах килĕшет. Хамăн пурнăçа журналистикăпа çыхăнтарас ĕмĕт-тĕллев пур, – пĕлтерчĕ Эвелина Малова.

Çутçанталăка сăнама юратакан хĕрачан, паллах, пĕр-пĕр пысăкрах хайлав та çырас килет. Тĕп сăнарсен прототипĕсем те пур ĕнтĕ. Эвелина аппăшĕпе Каринăпа мăнаçланать. Ара вăл, аслă шкулта вĕренекенскер, пушă вăхăт тупса сăвăсем çырать.

Курнинчен курманни, пĕлнинчен пĕлменни нумай, теççĕ. Медиацентра çӳрекен ачасем республикăри-çĕршыври хыпарсемпе кăсăклансах тăраççĕ. Нумаях пулмасть иртнĕ Пĕтĕм Раççейри çамрăк журналистсемпе блогерсен «Юнпресс: горизонт ответственности» конкурсăн ĕçĕ-хĕлĕпе те интересленнĕ вĕсем. Тантăшĕсен çитĕнĕвĕсемпе хавхаланнă ачасем чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Людмила Миронова ертсе пынипе хăвăртах статьясем калăпларĕç.

Аслă ӳсĕмрисем пурте, тен, ăнкармаççĕ пуль. Анчах та хальхи вăхăтри ачасем чăннипех анлă тавракурăмлă. Нумай çĕнĕ сăмах пĕлеççĕ. «Медиатренд» сăмахăн пĕлтерĕшне тӳрех ăнлантарма пултараççĕ. Кăсăклă çырнă, пысăках мар калăпăшлă текстсене вулама юратакансем ытларах. Медиацентр ертӳçи, чăваш тата вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенсем пулăшнипе ачасем шăпах та пулăмсене уçăмлăн уçса пама хăнăхаççĕ.

Пĕлӳ çуртĕнче каникул вăхăтĕнче те пурнăç вĕресе тăчĕ. Туçи Мăрат шкулĕ çумĕнче лагерь тухăçлă ĕçлерĕ. Акă, Раççейри Пушкин кунне халалласа «Пирĕн пуянлăх – пирĕн чĕлхе» темăпа анлă мероприяти ирттернĕ. «Пушкин хайлавĕсене вулатпăр» литература гостинăйĕ йĕркеленĕ. Уйрăмах мероприятире медиацентра çӳрекенсем хастар пулнă.

Шкулта ачасен йышĕ пысăк мар, анчах педколлектив тăрăшса тимленипе вĕсем вĕренӳпе спортра та çитĕнӳсем тăваççĕ, класс тулашĕнчи мероприятисенче те пултарулăха аталантараççĕ.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

## Паллă художниксен ĕçĕсем тыткăнларĕç

**Лагерьте ачасем вăхăта хаваслă, кăмăллă, савăнăçлă, усăллă ирттерчĕç. Сывлăха çирĕплетрĕç. Тĕрлĕ тематикăпа çыхăннă квестсем, викторинăсем, çавра сĕтелсем, мастер-классем, ăмăртусем тата тем тĕрлĕ тĕлпулусем иртрĕç. Çакăн пек пулчĕ Санарпуç шкулĕнчи лагерьти пурнăç.**

Çулçӳревсемпе экскурсисем те ачасене килĕшеççĕ. Иртнĕ кунсенче Çĕрпелĕнчи галерейăра пултăмăр. Надежда Викторовна Андреева кăмăлтанах галерея историйĕпе, картинăсемпе паллаштарчĕ. Н.П. Карачарсков, Элли Юрьев картинисене пуçласа куртăмăр, паллашрăмăр. Галерея – асам тĕнчи, ĕçпе вăрçă ветеранĕсен портречĕсем, ĕç паттăрĕсене сăнлакан картинăсем, пейзажсем. Илемлĕ ӳнер тĕнчи. Экскурси пурин кăмăлне те кайрĕ.

**Ирина СЕМЕНОВА**



## Медиа – пирĕн чунра

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Усăллă тĕлпулу

**Каникул – хаваслă та савăнăçлă вăхăт. Выляса кулма, канма, вăхăта усăллă ирттерме пулать. Санарпуç вăтам шкулĕ çумĕнчи лагерьте канакансем каникул кунĕсемпе кăмăллă. Çу кунĕсем аван, пătăрмахсăр иртчĕр тетпĕр.**

Лагерьте канакансемпе Вăрнарти ВДПО пуçлăхĕ Маргарита Тихонова тата Раççей МЧС-ĕн Вăрнар округĕнчи асăрхав ĕçĕ-хĕлĕн уйрăмĕн пуçлăхĕ Алексей Петров тĕл пулчĕç. Пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисемпе паллаштарчĕç, пĕве, шыв-шур таврашĕнче асăрхануллă пулмаллине аса илтерчĕç. Ыйтусем çине хуравларĕç. Ачасем пушар çинчен калакан тупмалли юмахсен тупсăмĕсене шырарĕç, пуçватмăшсене пĕлме те кăсăк пулчĕ, викторина та интереслĕ иртрĕ.

«Пушар – хăрушă пулăм. Асăрханулăх йĕркине пурин те пăхăнмалла», – пĕтĕмлетрĕç тĕлпулу вĕçĕнче.

**Ирина СЕМЕНОВА**





# Савăнăçлă кантăмăр

**Çулла – çулталăкăн чи илемлĕ те савăнăçлă вăхăчĕ. Эпĕ ăна яланах чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Мĕншĕн тетĕр-и?**

Çулла тӳпи те янкăр кăвак, хĕвелĕ те йăл! кулса ăшшăн пăхать, шурă упа çурине аса илтерекен măранкка пĕлĕчĕ те аран-аран йăраланса тухать, çавра çилĕ варинкке евĕр çавăрттарса илет тата сывлăшĕ те уçă – кăкăр тулли сывлас килет.

Çуллахи вăхăтра тантăшăмсемпе Санарпуç вăтам шкулĕ çумĕнчи «Санар» лагере çӳрерĕмĕр. Кăçал пурĕ тăватă отряд йĕркеленчĕ, кашнин хăйĕн девизĕ, речевки, ĕç йĕрки, канăвĕ, юрри-ташши.

Эпĕ виççĕмĕш отряда лекрĕм. Ăна «Уйăх ачисем» («Лунатики») ят патăмăр. Вожатăйсемпе пĕрле хамăра килĕшекен девиза суйласа илтĕмĕр:

*Космоса эпир тĕпчетпĕр,*
*Уйăх пирки те пĕлетпĕр.*
*Вăхăт çитĕ – курăпăр –*
*«Уйăх пепки» пулăпăр.*

Речевка:

*Тĕнче уçлăхĕ тăрăх*
*çулçӳреве тухмашкăн*
*Хавас çиçĕм-ракета*
*тăпăр-тăпăр тăвать.*
*Асамлă çăлтăрсем,*
*пире хапăл тусамăр,*
*Яш чун-чĕре сирĕн патах*
*туртать.*

Лагере хаваспах çӳретпĕр, вăхăта усăллă ирттеретпĕр, зарядка тăватпăр, чупатпăр, сикетпĕр, вылятпăр, юрлатпăр-ташлатпăр, хусканусем тăватпăр.

Эпир тантăшсемпе футбол вăййине кăмăллатпăр. Шурă-кăвак йăрăмлă мечĕкĕ пĕр ураран тепĕр урана куçать, хытăрах тапса ярсан хапхаран хапхана вăйн!-латать кăна!

Лапталла вылянă чух тата чĕре еплерех сикет – хыçран хăвалакан мечĕкĕ ан лектĕр тесе вĕççе пыратăн – ура çĕре перĕнмест.

Çуллахи илемлĕ вăхăта тăван шкултах кăсăклă ирттерме май пулнишĕн савăнатăп. Аякка кайса çӳремесĕрех вăхăта усăллă ирттерме, лайăх канма пулать, аттеаннене пулăшу пама та ĕлкĕретпĕр.

Тепĕр çул та «Санар» лагере çӳреме ĕмĕтленетĕп.

**Артемий СЕРГЕЕВ,**
**7-мĕш класра вĕренекен,**
**Санарпуç шкулĕ**

# Анне маттур

Манăн анне шкулта ĕçлет. Ачасемшĕн чунтан тăрăшать. Нихăçан та ятлаçнине илтеймĕн. Çитĕннисемпе те, пĕчĕккисемпе те ăшшăн сăмахлать. Ачасем те хисеплеççĕ, юратаççĕ ăна.

Анне хуйхă-суйхă та нумай курнă. Эпĕ ăна яланах пулăшатăп, йывăр чух лăплантарма тăрăшатăп.

Манăн анне пек лайăххи, маттурри ниçта та çук.

**Арина ПЕТРОВА,**
**2-мĕш класс,**
**Туçи Мăрат шкулĕ**

# Кашни вăхăт илемлĕ

Шăрăх çу кунĕ тăратчĕ ун чухне. Тӳпере пĕр пĕлĕт татăкĕ те çук. «Мĕн тери шăплăх!» – тĕлĕнсе пуçне çĕклерĕ ачасенчен пĕри. «Шăплăх? Курăр, çумăр килет!» – кăшкăрчĕ тепри.

Тем хушăра таçтан хура пĕлĕт шăвăнса тухрĕ. Шултра тумламсем патлатма пуçларĕç ĕнтĕ. Аслати кĕмсĕртетет. Ăçта тарса пытанас? Таврара пĕр хӳтлĕх те çук. Çав самантра машина килни курăнчĕ. Пире пурне те лартрĕ те ялах çитерсе ячĕ.

Кашни самантăн хăйĕн илемĕ пур. Çакна каласшăн эпĕ. Хура пĕлĕт, çутатакан çиçĕм, кĕрлекен аслати... Чун çӳçенет. Çапах та çумăр хыççăн янкăр пĕлĕт тухасса, йывăç-курăк ешерессе пĕлетĕн. Хĕпĕртетĕн çутçанталăкăн вăйĕпе ачашлăхне туйса. Пурăнас та пурăнас килет çĕр çинче.

**Эвелина МАЛОВА,**
**7-мĕш класс,**
**Туçи Мăрат шкулĕ**

# Самана сакки сарлака

Манăн асаттепе аслапай вырăс йăхĕсенчен. Асатте – Павел Александрович, арăмĕ Елена пулнă. Вăл вăхăтра Вăрманкас ялĕ йĕркеленмен, унта вăрман ӳснĕ. Ку вырăна вĕсене, Кушлавăш вырăсĕсене, ссылкăна янă пулнă. Асатте вăрман касса пӳрт лартнă, пурăнма тытăннă. Çавăнтан пуçланса кайнă та Вăрманкас ялĕ.

Ман атте Игнатий Павлович Павлов 1898 çулта çуралнă. Апай – Нурăс хĕрĕ. Евдокиния Прохоровна Павлова, 1899 çулхи. Атте граждан вăрçине хутшăннă, аманнă. Пурпĕр ăна вăрçа илсе кайнă, каллех суранланнă. Финн вăрçинче çапăçнă, унта та аманнă. 8 уйăх таран ун пирки хыпар пулман. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине те хутшăннă. Костыльпе пулсан та тăшмана хăваласа малаллах кайнă, Германие çитнĕ. Вăрçă чарăнсан киле таврăннă.

Палăртса хăвармалла, фронта кайиччен вăл колхоз тунă çĕрте тăрăшнă. Ял Советĕнче ĕçленĕ, колхоз бухгалтерийĕнче вăй хунă. Сывлăхĕ начарланса пынă, ăна утарçа куçарнă. Унăн Михаилпа Петр шăллĕсем пулнă. Петр салтакран таврăнайман. Михаил милиционерта ĕçлесе пурăнчĕ.

Эпĕ 1939 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ. Пĕчĕклех çăкăр хакне пĕлсе ӳсрĕм. Аттепе аннене пире çитĕнтерме çăмăл килмен. Пурнăçа аран-аран сыпăнтарса пынă. Эпĕ, 8 çулти ача, çара уран колхоз пăрăвĕсем хыççăн чупаттăм. Урасем шăнса кайсан кĕпе аркипе хупласа ăшăтаттăм та каллех вĕсем хыççăн ыткăнаттăм. Йĕркеллĕ тумтир çук пирки 9 çулта тин Вăрманкас шкулне çӳреме пуçларăм. 7 класс хыççăн паспорт паман пирки колхозрах юлмалла пулчĕ, фермăра ĕçлерĕм.

1943 çул питĕ çумăрлă килчĕ, çĕрулми анкартинчех выртса юлчĕ. Сакайне хурайман. Пиччесем вăрмана кайса юман йĕкелĕ пуçтаратчĕç, ăна çунакан вут çине пăрахса пĕçерсе çинĕ.

Эпир пĕр çемьере 10 ача ӳснĕ. Вăрçă нушине пайтах тӳснĕ. Манăн тăватă пичче, виçĕ акай, икĕ йăмăк пулнă. Икĕ акка вăрман каснă, тепри вара Сăр хĕрринче окоп чавнă çĕрте чирлесе киле таврăннă. Вăл çул тунă çĕрте те пилĕк авнă, фермăра çынсем çитменрен ăна унта та илсе кайнă.

Икĕ пичче те учителе вĕренсе тухнăскерсемччĕ. Александр, 1929 çулта çурални, Австри, Венгри, Украина çĕрĕсенчи вăрçă хирĕсенче пулнă, аманнă. Чирсене пула пĕртăвансенчен виççĕшĕ çĕре кĕчĕç, тата иккĕшĕ пĕр талăкрах пурнăçран уйрăлчĕç. Хальхи вăхăтра эпир иккĕн çеç юлтăмăр. Нина акай химзаводра кранпа ĕçлесе пенсие тухрĕ. Вăл халĕ 90 çул урлă каçрĕ.

Вĕçенкайăк та, карта юпи те мăшăрлă теççĕ. Эпĕ те Тур çырнине тĕл пулса çемье çавăртăм. Хальхи пекех астăватăп. 1960 çулта колхозсене пĕрлештерме пуçларĕç. Вăрманкаспа Мăньял Хапăс хуçалăхĕсен шăпине татса парас пирки пуху пулчĕ. Ун чухне тантăшăм мана Казахстанра çерем уçнă çĕрте ĕçлесе пурăнакан пиччĕшĕпе паллаштарчĕ. Эпир çав çулах Мăньял Хапăс каччипе Алексейпе пĕрлешрĕмĕр. Пирĕн 3 ача кун çути курчĕ. Асли, Нина, зоотехникумран вĕренсе тухсан практикăра Элĕк районĕнче пулчĕ те унтах мăшăр тупрĕ. Ачасем ӳссе саланса пĕтрĕç. Кĕçĕн ывăл та Шупашкарта тĕпленчĕ. Анчах та аслă ывăлăн – Петьăн – шăпи йывăр килчĕ. Вăл 10 класс пĕтерсен ашшĕпе пĕрле «Сельхозтехникăра» шоферта çӳрерĕ. Унтан, салтак атти тăхăнсан, Афганистан вăрçине лекрĕ, хытă аманнăран халĕ те чирлесе пурăнать, пенси илмест. Унăн çурăм шăмми арканнă. Вăл вăрçăра та шофер пулнă, унпа пĕрле кабинăра тата икĕ çар юлташĕ ларнă. Тутăррине хăпарса çитиччен вĕсене душмансем амантнă, машинине йăвантарса янă. Икĕ салтакĕ çавăн чухнех вилнĕ. Вĕсемпе пĕрле ман ывăла та морга кайса пăрахнă. Анчах ун чунĕ тухайман, вара ăна, хытă аманнăскерне, больницăра операцисем тунă. Çӳрекен пулчĕ, анчах та ĕçлеймест, тăтăшах чирлет.

Хальхи вăхăтра эпĕ пĕчченех пурăнатăп. Мăшăрăм 2002 çулта çĕре кĕчĕ. Вăл пенсие тухиччен «Сельхозтехника» организацире чылай çул шоферта ĕçлерĕ.

Ĕмĕр ирттересси – уй урлă каçасси мар. Колхозра 50 çул çĕрне-кунне уямасăр ĕçлерĕм, «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçрĕм. Пурнăç йӳççипе-пылаккине сахал мар астиврĕм. Выçă аптратнипе пайтах вĕлтрен, пиçен, кăшкар ути татнă, çĕрĕк улма та пуçтарнă. Астăвасса, пуçа çыхма тутăр та çукчĕ. Килте тĕртсе тунă япаласемпех саплаштаркаласа пурăннă.

Хальхи вăхăтра пурте пур темелле, анчах та çав вăхăтрах çынсен курайманлăхĕ ӳсет. Иртнĕ ĕмĕрте 30 сотăй çĕр панă. Вăл çитнĕ, ĕне выльăх та усранă. Халĕ çĕр таçта та илме май пур. Анчах та хăшпĕрисене вăл çавах çитмест. Кӳршĕ кӳрше хисеплемест. Ĕмĕр пĕрре килет. Туслă пурăнасчĕ.

**Ольга ТАЙРУХИНА**
Мăньял Хапăс

# Асăрхануллă пулмалла

**Çулла шыв-шур чи хăрушлăхлă вырăнсен шутĕнче. Çынсем ытларах çутçанталăк ытамĕнче канма, ăшă çанталăкра шыва кĕрсе уçăлма тăрăшаççĕ. Анчах йĕркелĕх çинчен, яланах асăрхануллă пулмалли çинчен манни пĕтерет-çке. Çавна пулах – инкексем ĕнтĕ. Республикăра кăçал çу пуçламăшĕнчех аслисемпе те, ачасемпе те пулнă синкерлĕ тĕслĕхсем, шел те, çакна каллех çирĕплетрĕç.**

## ХĂРУШСĂРЛĂХ

Хăрушсăрлăх ыйтăвĕ, чăнах та, çивĕч. Çавăнпах вăл Вăрнар округĕн чрезвычайлă лару-тăрусене асăрхаттарассипе тимлекен комиссин ларăвĕнче те тĕп вырăна тухнă. Унта шыва кĕмелли тапхăра округра инкек-синкексĕр ирттерсе ярассине, ку тĕллевпе йышăнакан мерăсене сӳтсе явнă.

Мобилизаци хатĕрленĕвĕн тата ятарлă программăсен секторĕн пуçлăхĕ Андрей Сорокин ларура пĕлтернĕ тăрăх, виçĕмçултанпа паянхи кунччен пирĕн тăрăхра, телее, шывпа çыхăннă инкексене шута илмен. Ку ăнăçлă кăтартусене тытса пыма мĕнпур сыхлăх мерине вăйлатмаллине, çав шутра кашниннех хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмаллине палăртнă вăл.

Каласа хăвармалла, муниципалитет территорийĕнче 200 ытла шыв-шур объекчĕ. Вĕсенчен 50-шĕнче тенĕ пек çынсем шыва кĕреççĕ. Официаллă майпа вара кăçал шыва кĕме тата çынсене йышлă канма çичĕ вырăна çирĕплетнĕ. Вĕсем – Кӳлхĕрри кӳлли, Вурнарка пĕви (поселокăн кăнтăр енĕ), Анаткас Хапăсри пĕве (Тĕп урам), Карсак пĕви (Санарпуç ялĕнчен хĕвелтухăç еннелле), Уравăшри тата Кив Сăрьелĕнчи гидротехника сооруженийĕсем, Уйкас Кипекри культура çурчĕ хыçĕнчи пĕве. Вĕсене пурне те республикăри шыравпа çăлав службин специалист-водолазĕсем тишкерсе тĕрĕсленĕ. Çавăнпа та ку вырăнсенче кăна ишни шанчăклăрах.

Территори пайĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсем те вырăнти халăха хăрушсăрлăх йĕркине аса илтерессипе, сыхăрах пулма хăнăхтарассипе нумай ĕçлеççĕ. Ларура та вĕсене юханшывсемпе пĕвекӳлĕсенчи хăрушă вырăнсем пирки çынсене пуренлĕ пĕлтерме, кун çинчен ятарлă паллăсем вырнаçтарма сĕннĕ.

Ашшĕ-амăшĕсен çак тапхăрта пушшех те сыхă пулмалла. Ачасене шыв-шур çывăхĕнче инкеке лекесрен хăйсене тĕрĕс тытма хăнăхтармалла, вĕсене унта асăрхавсăр çӳретмелле мар.

**Хамăр инф.**